Суд реформи: çыннăн тата гражданинăн интересĕсене хӳтĕлесси

Нихăçан та судпа айăпланмастăп, тĕрмене çакланмастăп, темелле мар...

Суд текен сăмах хăех çынна хăратса тăнă. Ку таранччен... Вăхăт иртнĕçемĕн эпир çакна ăнланма пуçлăрăмăр: чуна хумхантаракан ыйтусем сиксе тухсан, çав пăтăрмахсене судра çеç тĕрĕс татса пама пултарасса ытларах ĕненме пуçларăмăр. 2000 çулта пуçланнă суд реформи те çакна çирĕплетсе пачĕ: çыннăн тата гражданинăн прависемпе ирĕкĕсене хӳтĕлесси, уççăнлăх– акă, мĕн чи малта суд ĕçĕнче.

РФ Президенчĕ Д.А. Медведев РФ Федераллă Пухăвне янă Çырăвĕнче коррупции хирĕç çине тăрса кĕрешмеллине, унăн çул-йĕрне палăртрĕ: «Коррупципе ăнăçлăн кĕрешес тесен, патшалăха ертсе пыракан пур сферăсен те общество умĕнче уçă пулмалла, патшалăх влаçĕсен, судсен тата суд сообществин органĕсене те пырса тивет çакă» – теснĕ унта.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн çак шухăшĕ кĕçех пурнăçа кĕме пуçлассине çакă та çирĕплетсе парать: кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, «Раççей Федерацийĕнчи судсен ĕçĕ çинчен калакан информаципе тивĕçтересси çинчен» саккун вăя кĕрет. Район сучĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтнă май эпĕ район сучĕн председателĕнчен Э. Л. ТАРАСОВАРАН чи малтанах халь çеç асăннă саккун çинче тĕплĕнрех чарăнса тăма ыйтрăм:

– Çак саккунпа килĕшӳллĕн граждансем судсен ĕç вăхăчĕ тата ĕç йĕрки çинчен, судри ĕççемпе заявленисем мĕнле йĕркепе малалла кайни, вĕсене хăçан тата ăçта пăхса тухни çинчен тĕплĕн тата ним чăрмавсăр пĕлме пултараççĕ. Унсăр пуçне суд акчĕсемпе кирек кам та паллашма пултарнине шантаракан системăна туса хума та сĕннĕ çак саккунра. Суд влаçĕн уççăнлăхĕпе тивĕçтернипе пĕрлех саккун хӳтĕлекен вăрттăнлăха, ĕçе пăхса тухнă май инкек тӳсекене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине, калама юраман кăтартусене хӳтĕлемеллине те пăхса хăварнă унта.

Асăннă саккун çавăн пекех судсемпе массăллă информаци хатĕрĕсем хушшинчи çыхăнăва йĕркелесе яма пулăшать. Журналистсем судăн уçă ларăвĕсене ирĕккĕнех кĕрсе итлеме пултараççĕ, судсем вара хăйсен ĕç результачĕсем çинчен массăллă информаци хатĕрĕсем валли информаци хатĕрлесе параççĕ. Саккунра судсен ĕçĕ çинчен тĕплĕнрех пĕлме май паракан ытти мелсене те пăхса хăварнă: граждансем суд ларăвĕн залĕсене кĕме пултарни, суд вырнаçнă çуртра курăнакан информацисем вырнаçтарни, ыйтсан, суд ĕçĕ çинчен информаци пани.

Саккунпа судсен ĕçĕсем çинчен калакан информацисене Интернет сетĕнче вырнаçтарасси çине пысăк тимлĕх уйăрмаллине те пăхса хăварнă. Ку информацисен шутне суд акчĕсем (каласа хăвармалла, вĕсене федераллă саккун ыйтнисемпе килĕшӳллĕн вырнаçтармалла), судра пăхса тухакан ĕççем çинчен калакан кăтартусем, суд статистикин кăтартăвĕсем, судсем, суд департаменчĕ, суд сообществин органĕсем тата суд ĕçĕ çинчен калакан ытти кăтартусем кĕреççĕ.

Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн Интернет-страницине эпир темиçе çул каяллах йĕркелесе янă. Ана тăтăшах çĕнетсе тăратпăр. Кирек кам та кирек хăш вăхăтра та çак сайта кĕрсе хăйне кирлĕ информаци илме пултарать. Муркаш район сучĕн коллективĕ июлĕн 1-мĕшĕнче вăя кĕрекен çӳлерех асăннă саккуна пурнăçлама хатĕрри çинчен пĕтĕм яваплăха ăнланса шантарсах калать.

– Эльза Леонидовна, Сирĕн çак сăмахсенчен Эсир хăвăр коллектив ĕçĕхĕлĕпе кăмăллă пулни сисĕнет. Çавăнпа та калаçăва малалла тăсса кайиччен унпа тĕплĕнрех паллаштарни те ытлашши пулмĕ.

– Суд реформин пĕрремĕш тапхăрĕнче (2000 çултан пуçласа 2008 çул таран), чăннипех те, судьясен йышĕ те, суд аппарачĕн йышĕ те ӳсрĕ. Паян район сучĕн коллективĕ 20 çынран тăрать. Тӳрех каламалла, ĕçлеме пултаракан коллектив. Суд председателĕсĕр пуçне тепĕр виçĕ судья : Э. Г. Волков, Э.А. Степанова, С.В. Трихалкин. Суд председательне пулăшаканĕ – И. Н. Захаров, судьяна пулăшакансем виççĕн: Р.С. Сергеева, Т.В. Волкова, О.Н. Яковлева. Пĕтĕмĕшле пая И.А.Васильева ертсе пырать. Суд секретарĕсем 4-ăн: С.Р. Иванова, З.П.. Галкина, О.В. Бирюкова, А.В. Яковлев. Администратор – В.Г. Иванов, суд çуртне тирпейлесе, хуралласа тăракансем тăваттăн.

Автортан. Паянхи район сучĕн коллективĕ хăйсен ĕçтешĕсен ĕçне малалла тăсать, Чăваш Республикинчи суд департаментĕнче ырă ят çĕнсе илнĕ. Виçĕм çул Улатăр хулинче Марий Эл республикин Верховнăй Сучĕн тата район сучĕсен председателĕсем пирĕн республикăри ĕçтешĕсемпе ĕçлĕ тĕл пулу ирттерчĕç. Унта пирĕн республикăран пĕтĕмпе район судйисенчен пиллĕкĕн хутшăнма тивĕç пулчĕç пулсан, вĕсен шутĕнче – Муркаш район сучĕн председателĕ Э. Л. Тарасова. Çавăн пекех Муркаш район сучĕн ĕçĕпе юлашки икĕ çул хушшинче Иваново, Кострома, Ульяновск облаçĕсенчи, Тутарстан, Удмурт Республикисенчи суд председателĕсем килсе паллашрĕç, хăйсене валли усăллине, çĕннине нумай тупса палăртрĕç. Муркашсемех республикăра чи малтан район сучĕн историне çырма пуçларĕç: альбомсем хатĕрлерĕç, стенд йĕркелерĕç. Вĕсен опычĕпе республикăри ĕçтешĕсем те килсе паллашрĕç.

Коллектива Э. Л. Тарасова ертсе пыма пуçланăранпа çак 6 çул хушшинче ырă улшăнусем татах та пулса иртрĕç. Суд çурчĕ тĕплĕ юсав ĕçĕсем хыççăн тултан та, шалтан та хăйĕн сăн-сăпатне улăштарчĕ. Коллектив республикăри судсем хушшинче иртекен тĕрлĕрен конкурссене те хутшăнать. Иртнĕ çул судсем хушшинче иртнĕ çуркуннехи фестивальте Муркашсем тĕрлĕ номинацине хутшăнса, кашнинчех малти парнеллĕ вырăнсене çĕнсе илме пултарчĕç. Ноябрьте иртнĕ КВНра вара Чăваш Республикин Аслă сучĕн коллективĕ хыççăн 2 вырăн йышăнчĕ Муркаш район сучĕ.

Тата çакна та каласа хăвармасăр май çук. Район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова «Чăваш Республикинчи чи лайăх суд председателĕ» ят çĕнсе илме пултарчĕ. Эльза Леонидовна Чăваш Республикинчи судъясен Канашĕн членĕ пулса тăрать.

Судра ĕçлекенсем те спортпа туслă. Чăваш Республикин суд департаментĕ судьясемпе суд аппарачĕсем хушшинче ирттерекен ăмăртура пирĕн район сучĕн ĕçченĕсем 2 тата 3 вырăнсене çĕнсе илчĕç. Районта ирттерекен ăмăртусене активлă хутшăнаççĕ. Иртнĕ çулхи кăтартусемпе паллаштарма ыйтсан, чи малтан вăл акă мĕн çинче чарăнчĕ:

– Иртнĕ çул уголовнăй ĕççене пĕтĕмпе 123 пăхса тухрăмăр. Вĕсем тăрăх 133 çын судпа айăпланчĕ. Виçĕм çул пĕтĕмпе 139 уголовнăй ĕç пăхса тухса, 146 çынна явап тыттарнăччĕ. Иртнĕ çул преступленисен йышĕ сахалланни, чăннипех те, савăнтарать. Анчах та кăмăла хуçакан сăлтав та пур: çул çитмен çамрăксем преступлени виçĕм çулхинчен нумайрах турĕç. 2008 çулта вĕсен йышĕ 16 пулнă пулсан, иртнĕ çул 19 çитрĕ ку кăтарту. Çитменнине вĕсенчен иккĕшĕ малтан та судпа айăпланнă пулнă.

Ку мĕн çинчен калать? Акă мĕн çинчен: çул çитмен çамрăксем теветкеллĕ ушкăна кĕреççĕ. Çавăнпа та ашшĕамăшĕсен, вĕрентӳ учрежденийĕсен, районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенийĕн, район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен комиссин вĕсемпе тимлĕ пулмалла, çине тăрса ĕçлемелле. Район сучĕ те çул çитмен çамрăксемпе ĕçлессинчен айккине пăрăнса юлмасть. Эпир судопроизводствăна Пĕтĕм тĕнчери право нормисемпе килĕшӳллĕн ачасене хӳтĕлеме май паракан ювеналлă технологисене пурнăçа кĕртетпĕр.

– Эльза Леонидовна, гражданла ĕççене малтанхи çулхинчен сахалрах е нумайрах пăхса тухнă?

– Вĕсене пурĕ 452 пăхса тухнă. Урăхла каласан, виçĕм çулхинчен 49 ĕç чухлĕ нумайрах. Тавăççене тивĕçтерсе шыраса илнĕ сумма вара 5 хут ытларах та ӳсрĕ: 2008 çулта 5102982 тенкĕ пулнă пулсан, пĕлтĕр 36011618 тенкĕпе танлашрĕ.

Çавăн пекех пĕлтĕр административлă 20 ĕç пăхса тухнă, виçĕм çул – 13.

Кусемсĕр пуçне район судне тăратнă представленисемпе, ходатайствăсемпе, çăхавсемпе 291 материал пăхса тухнă. 2008 çул ку кăтарту 251 танлашнăччĕ.

– Районти миравай судьясен участокĕсем мĕнле ĕçлесе пыраççĕ?

– Пирĕн районта пурĕ 2 миравай судья участокĕ. 1-мĕш номерлĕ суд участокĕ иртнĕ çул йышăнусем кăларса 1847 ĕç пăхса тухнă. Вĕсенчен 1730-шĕ тăрăх суд приказне кăларнă. Ку вăл гражданла ĕççем. Уголовнăй ĕççене вара Т.М. Салдыркина ертсе пыракан çак суд участокĕ 66 пăхса тухнă.

2-мĕш номерлĕ суд участокне Е.Г. Никитина ертсе пырать. Кунта 1121 гражданла ĕç пăхса тухнă. Вĕсенчен 1040-шĕ тăрăх суд приказне кăларнă. 2-мĕш номерлĕ суд участо-кĕ 71 уголовнăй ĕç пăхса тухнă.

Административлă ĕççене вара 1-мĕш номерлĕ суд участокĕ 258, 2-мĕш номерлĕ суд участокĕ 356 пăхса тухнă.

– Район сучĕ умĕнче тăракан тĕллевсемпе задачăсем. Мĕнлисем вĕсем?

– Судăн тĕп тĕллевĕ - суда килекен ĕççене вăхăтра тата пахалăхлă татса парасси. Пĕр айăпсăр çын та йăнăшпа судпа ан айăплантăр тата пĕр айăплă çын та тунă преступленишĕн айăпланмасăр ан юлтăр. Ку вăл ĕнер те çаплах пулнă, паян та çавăн пекех.

Суд умĕнче тăракан задачăсем пирки сăмах пуçарнă май çакна та палăртмалла. Гражданла ĕççене пăхса тухнă чух граждансен Конституципе пăхса хăварнă прависемпе ирĕкĕсене хӳтĕлесси чи пирвайхи вырăнта пулмалла: тивĕçлĕ сăлтавсемсĕр заявлени йышăнман тĕслĕхсем ан пулчăр. Урăхла каласан, граждансем хăйсен ыйтăвĕсемпе суда килме шикленсе ан тăчăр.

Кашни ĕçе пĕрре пăхса тухма палăртсанах пăхса тухма тăрăшмалла. Çавăнпа та суд ларăвĕнче пăхса тухиччен кашни ĕçпех питĕ тĕплĕн хатĕрленмелле.

Автортан: район сучĕ массăллă информаци хатĕрĕсемпе малалла та тачă çыхăну тытма тĕллев лартать. Кун пирки Эльза Леонидовна хăй çакăн пек шутлать:

– Виçĕм çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Правительстви 2007-2011 çулсенчи «Раççейри суд системин аталанăвĕ» федераллă тĕллевлĕ программа çинчен 583-мĕш номерлĕ постановлени кăларчĕ. Асăннă программăн тĕллевĕ – правосудин пахалăхĕн, граждансемпе организацисен прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлессин пахалăхне ӳстересси пулса тăрать. Çак программăна пурнăçласси вара шăпах суд уççăнлăхĕпе тата унăн ĕçĕ курăнса тăраслăхĕнчен нумай килет. Çынсем суда килме хăраса ан тăччăр тесе тивĕçлĕ условисем туса хумалла тата ытти те. Апла пулсан çак программăпа тата кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, «Раççей Федерацийĕнчи судсен ĕçĕ çинчен калакан информаципе тивĕçтересси çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн пирĕн суд ĕçĕхĕлĕпе халăха паллаштарсах тăмалла.

Автортан: район сучĕ хаçат страницисенче иртнĕ çул уçăлнă икĕ ятарлă ярăма малалла тăсма шутлать. Пĕрремĕшĕ – «Суд реформи: çыннăн тата гражданинăн интересĕсене хӳтĕлесси». Кунта куллен эпир тĕл пулакан ыйтусен хуравĕсене судра епле татса панисемпе паллашма пултаратăр. Тепĕр ярăм – «Суд пырать». Асăннă ярăмсенче эсир судра пăхса тухнă тĕслĕхсем çине таянса йĕркеленĕ материалсем пулĕç. Çавăн пекех районти радиопередачăсене активлă хутшăнма шутлать район сучĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Ялта ырă ятлисем

Хĕрĕх çичĕ çул хĕрĕх çичĕ кун мар

Çапла, шăпах çакăн чухлĕ вăхăт трактор рульне алăран вĕçертмен Чапаев ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăх механизаторĕ Энгельс Григорьевич Григорьев. Çак кунсенче вăл хăйĕн 75 çулхи юбилейне паллă тăвать. Пултаруллă та хастар ĕçчене хамăр районта кăна мар, республика тулашĕнче те пĕлекенсем сахал мар. Çак тапхăрта вăл тивĕçнĕ Хисеп грамотисемпе дипломсене, Тав çырăвĕсемпе парнесене те асăнса пĕтерме йывăр. Ĕçчен механизатор 1978 çулта «ЧР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Вăл икĕ созывра ял Совечĕн, тепĕр созывра район Совечĕн депутачĕ, парти конференцийĕн делегачĕ те пулнă. «Коммунизмла ĕç ударникĕ» ята пĕр хут кăна мар тивĕçнĕ. Ана В.И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине халаллана юбилей медальне панă, икĕ хутчен «Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи», «Тăххăрмĕш пилĕк çуллăх» ударникĕ пулса тăнă. Унăн ятне Муркаш районĕн энциклопедине те кĕртнĕ.

Паллă ĕнтĕ, 1935 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче Чуманкассинче çуралнă Энгельс Григорьевичăн вăрçă хыççăнхи ачалăх çулĕсем çăмăлах килмен. 1951 çулта вăл 7 класс вĕренсе пĕтерсенех ашшĕпе амăшĕ, пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем пекех тăван хуçалăхра çĕр ĕçне кӳлĕннĕ. Малтан учетчикра, кайран весовщикра тăрăшнă. Хыççăн Йӳçкасси шкулĕнче тепĕр икĕ класс вĕренсе пĕтерсен Муркашри почта çыхăнăвĕн уйрăмĕнче надсмотрщик пулса ĕçлет, радио, телефон, телеграф линийĕсене тĕрĕслесе тăрассипе тимлет.

1954–1957 çулсенче Совет Çарĕн ретĕнче пулнă хыççăн яла таврăннă салтак 3 çул хушши бригадăра склад заведующийĕ пулса ĕçлет. Анчах та ăна техникăпа ĕçлес туртăм çĕнтеретех. Çапла вара вăл 1962 çулхи март уйăхĕнче Советскинчи профессипе техника училищине вĕренме каять. Кунтан вĕренсе тухса анлă профильлĕ тракторист-машинист специальноçне алла илет.



Колхоза таврăнсан ăна гусеницăллă трактор шанса параççĕ. 8 çул хушши вăл тракторпа хуçалăхра тĕрлĕ ĕççене пурнăçлать: сухине те, акине те, ытти ĕççене те. Техникăна лайăх пăхса тăрать, çунтармалли-сĕрмелли материалсене перекетлеме тăрăшать.

Колхоз правленийĕ, парти, профсоюз, комсомол комитечĕсем хастар çамрăкăн пултарулăхне асăрханах ĕнтĕ. Çавăнпах ăна 1970 çулта кустăрмаллă «Беларусь» трактор шанса параççĕ. Унпа вара вăл ака-суха ĕçĕсене те, çĕр улми лартас, ретсене кăпкалатас тата ытти ĕççене те хутшăнать. Тĕрĕссипе сахал-и-ха вара механизатор валли хуçалăхра ĕç?

33 çул хушши Энгельс Григорьевич хуçалăхра кустăрмаллă тракторпа тăрăшать. Ĕççене пурнăçланă чухне агротехника нормисене пăхăнассине, çунтармалли-сĕрмелли материалсене, запас пайсене перекетлессине тĕп вырăна хурать. Акă вăл ĕçленĕ хăш-пĕр çулсенче çĕр улмине пĕр гектар пуçне вăтамран 200–250 центнер пухса кĕртни те пулнă. Э.Г. Григорьевăн та çакăнта тӳпи пулман мар. Çу кунĕсенче вара выльăх апачĕ янтăлассипе, утă-улăм турттарассипе тимленĕ. Çулленех 1700–2000 эталон-гектара яхăн ĕç пурнăçланă.

Хăйĕн тĕп ĕçне пурнăçланипе пĕрлех, ял çыннисем ăна тĕрлĕ созывсенче ял Совечĕн, район Совечĕн депутачĕ пулма суйланă май, вĕсен наказĕсене пурнăçлассипе те сахал мар тăрăшма тивнĕ. Ялта шыв пăрăхĕсем хурса хăварнинче, пĕвесене юсанинче, колхозри ĕне ферми патне асфальт çул сарнинче унăн тӳпи те пурах.

– Отпуск илсен те килте алă усса ларман, хуçалăхра тракторпа ĕçленĕ. Хăнăхман эпĕ çăмăл пурнăçа,– аса илет халĕ ĕç ветеранĕ.

Ана пурнăç тăршшĕпе ăшă кăмăл парнелекенĕ, хавхалантарса вăй парса пурăнаканĕ вара – Евгения Никитична Никитина. Ваçкасси хĕрĕпе вăл 1962 çулта çемье çавăрнă. Вăл та колхозрах уй-хир бригадинче тăрăшнă. Ĕçчен мăшăр 2 хĕр пăхса ӳстернĕ, 2-шĕ те аслă пĕлӳ илнĕ. Валентина Чуманкасси шкулĕнче кĕçĕн классене вĕрентет, Алина та кунта кĕçĕн классене вĕрентнĕ, халĕ Шупашкарта пурăнать. Иккĕшĕ те çемьеллĕ.

Энгельс Григорьевичпа Евгения Никитичнан 5 мăнук, 2 кĕçĕн мăнук. Чăннипех чун ăшши пулса тăраççĕ вĕсем ватă çынсемшĕн.

Энгельс Григорьевича çитсе килекен юбилей ячĕпе саламланă май çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей суннă пулăттăмăр.

В. ШАПОШНИКОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.